# Марина КАРЯГИНА: «МАНРА АЧАЛĂХ ПУРĂНАТЬ»

***Чăваш патшалăх телевиденийĕн кăларăмĕсене пăхакан ентешсем ăна лайăх пĕлеççĕ, чăвашла вулама юратакансемшĕн те унăн ячĕ асрах. Тата хушса хурас килет, театр искусствине юратакансем унăн пьесипе лартнă «Кĕмĕл тумлă çар» спектакле пăхса киленнĕ. Сăмахăм Марина Карягина пирки. Нумай пулмасть пултаруллă чăваш çыравçипе, журналисчĕпе тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ.***



**– Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ лартнă «Кĕмĕл тумлă çар» спектаклĕн пуçлар-и калаçăва? Ăна 2010 çулта Станислав Васильев режиссер сирĕн пьеса тăрăх лартнă. Ку ĕçшĕн С.Васильева та, сире те ЧР патшалăх премине панă. Спектакле пăхакан çын авторне пĕлмесен ниепле те ăна хĕрарăм çырнă темĕччĕ. Çавăн пек пысăк калăплă эпикăллă драма... Нумай вăхăт ĕçлерĕр-и вăл пьесăпа?**

– Халь шутласан хăрушă та. Вăл ман ăшра пурăннă, эпĕ – унăн ăшĕнче. Халăхăн мĕн ыратать – паян мана ыратать. Халăхăн пуласси – пирĕн ачасем. Çуратайăпăр-и вĕсене? Пирĕн пулĕç-и вĕсем? Ютта памăпăр-и, йытта панă пек?.. Пирĕнтен килет.

**– «Кĕмĕл тумлă çар» сирĕн пысăк сцена çинче лартнă пĕрремĕш ĕç. Драматургире тата каламаллисем пур-и?**

– Чăнах та, ку манăн пĕрремĕш лартнă пьеса. Черетре – «Куккуклă сехет» драма.

**– Вăл та историпе çыхăннă-и?**

– Унти ĕçсем паянхи кун пулса иртеççĕ. К.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче СССР халăх артисчĕ Валерий Яковлев лартать ăна.

**– Театрăн халăхи сезонĕнче спектакль пулса кун çути курать апла?**

– Çапла.

**– Ку аслисем валли çырнă пьесăсем. Эсир ачасем валли те сахал мар çыратăр, çапла-и?**

– Ачасем валли пукане театрĕпе мюзикл тăвасшăн. Пăрахмалла мар ачасене. Аслисем валли çыртăм пулсан, ачасем валли те çырма тăрăшатăп. Манра халь те ачалăх пурăнать. Вăл мана вĕрентсе тăрать. Телевиденире ачасем валли 23 çул «Шевле» кăларăм хатĕрлесе пыратăп. Ăна ачасем ертсе пыраççĕ, çамрăк корреспондентсен шкулне çӳрекенсем. Малтанах вĕсенчен чылайăшĕ чăвашла пĕлместчĕ те, ĕçленĕ май, вĕреннĕ май калаçма хăнăхрĕç.

**– Сирĕнте чăвашлăх тени питĕ вăйлă сисĕнет, «чăн чăваш» текенни шăпах эсир пек туйăнать.**

– Эпĕ паянхи кун та хамăрăн тĕнпе пурăнакансене сума сăватăп. Тутарстанра пурăнакан чăвашсен хамăрăн тĕне сыхласа хăварайни мана тĕлĕнтерет, савăнтарать.

Ваттисем чăн çĕре кайнине ĕненетĕп. Хĕртсурт пурах тетĕп. Хамăрăн, чăвашсен хăвачĕсем пулăшаççĕ мана, ют Турă пулăшаймасть.

**– Сирĕн хăвăрăн та çемйĕр, ачасем пур-и?**

– Пур, мăшăрăм хăй çинчен калаçнине юратмасть, хам та çемье пурнăçне çын çине кăларассине ырласа каймастăп. Пĕр ывăлпа пĕр хĕр пирĕн.

**– Иккĕленместĕп, вĕсем чăвашла пĕлеççех ĕнтĕ.**

– Çапла, вĕсен ячĕсем те чăвашла. Айдар 21 çулта, Илемпи хĕрĕм 15 çулта. Иккĕшне те пĕчĕкренех чăвашла калаçса ӳстернĕ.

**– Хăвăрăн ачăрсемпе эсир туслă пек туйăнать.**

– Эпир ӳснĕ вăхăтра атте-аннен ачисене ачашлама вăхăчĕ те пулман, йăли те урăхларахчĕ. Пирĕн хутшăнусенче ачашлăх, çепĕçлĕх нумай. Илемпи ыратать те: «Анне, эпĕ сана юратни çинчен паян каламан», – тесе çупăрлать. Айдарпа та пĕр-пĕрне лайăх ăнланатпăр.

**– Ывăлăр пурнăç çулне суйласа илнĕ пулĕ, вăл та сирĕн пекех пултаруллăхпа çыхăнтарнă-и пуласлăхне?**

– Вăл Турцире университетра вĕренчĕ, кайран Шупашкара таврăнчĕ. Халĕ сăнӳкерчĕксемпе питĕ кăсăкланать, фотоĕçе алла илессипе нумай вăхăт ирттерет. Çакна пула Айдарпа тăтăш чылайччен калаçса лараймастпăр, анчах эпир унпа пурпĕрех çывăх. Астăватăп, вăл çичĕ çул тултарнă тĕле эпĕ ăна Пăлхара илсе кайрăм, хамăрăн историе калаçа патăм, несĕлсем пурăннă вырăнсене кăтартрăм. Ывăнчĕ инçе çултан, анчах мĕнле тав турĕ çуралнă куна çапла парне хатĕрленĕшĕн. Хĕрĕме истори интереслентерет, рэп çырать. Шкулта та тантăшĕсене чăваш культурипе кăсăклантарма тăрăшать.

**– Эсир ывăлăрпа хĕрĕре пĕчĕкрен чăвашла калаçтарнă терĕр. Кăна пысăк хăюлăх теме юрать-тĕр, мĕншĕн тесен чылайăшĕ çакна тума вăтанаççĕ. Çине тăрсах ачисене вырăсла çеç калаçтараççĕ. Сăлтавĕ пирки интересленсен – урамра-мĕнре чăвашла калаçнăшăн ачисенчен куласран çапла тăваççĕ тесе ăнлантараççĕ.**

– Хăйсем çинчен çеç шутланипе çапла хăтланаççĕ ĕнтĕ, мĕскĕнленни пулать ку. Ун пек çынсем хăйсенчен хăйсем именеççĕ.

**– Марина, эсир мĕнле шутлатăр, кам айăплă çапла пулса тухнишĕн, çын хăйĕн тăван, ашшĕ-амăш чĕлхинчен вăтанса пурăннишĕн?**

– Никама та айăпласшăн мар. Ку енĕпе влаçа вăрçассине ырламастăп, чăваш чĕлхи пирĕн республикăра патшалăх чĕлхи шутланать – калаç, çыр, чару çук. Эпĕ чĕлхене аталантарассишĕн мĕн тума пултаратăп – тăватăп. Чăваш тĕнчине кашнин хăйĕнчен пуçламалла. Кашни мĕн-тĕр тăвать, пĕр-пĕринчен тĕслĕх илмелле. Ырă пурăнмалла, ĕçсе ашкăнмасăр, вăрçăнмасăр. Эпир çемьере уявсене те килти сăрапа ирттеретпĕр.

**– Сирĕн сăмахăрсем питĕ оптимистла илтĕнеççĕ. Чăвашсен пуласлăхĕ çук текенсене итлесе шикленмелле мар?**

– Тĕнчере пин-пин чĕлхе пулнă, вĕсенчен паянхи куна нумайăшĕ çитеймен (тĕрлĕ сăлтавпа). Эпир вара, чăвашсем, XXI ĕмĕрччен хамăрăн чĕлхене те, культурăна та сыхласа хăварайнă. Çавăн пек халăх нишлĕ-и? Çук. Вăй пур-ха пирĕн.

Юра тупа арпаштаратăп
юратупа курми пулса:
ту тăррине тăрса
çил çиллине чаратăп.

Çил чарăнать.
ăшă! –

...Ту çук!

Ту пек шăналăк
ту пулман –
шăн çут çанталăк

(çапла ман алă
хурăмне упрать
пуш-пушă çанă).

Тусем, çунат сулса,
ав вĕçсе кайрĕç
шур тӳпе пулса...
2000.

**– Ку шухăш эсир хатĕрлесе ертсе пыракан «Ирхи тĕпел» телекăларăмсене те сисĕнет. Сирĕн хăнасем интереслĕ, хăйне евĕрлĕ. Эсир вĕсене хăвăр асăрхаса чĕнетĕр-и е пуçлăхсем сĕннĕ çынсемпе калаçатăр?**

– Паян куракана мĕн кирлĕ тесе шутлатăп, çавна пама тăрăшатăп. Пуçлăхсем ку ĕçе тĕрĕслесе хушса тăмаççĕ. Кăларăмсене телекуравçăсем пăхаççĕ, кăçал «Ирхи тĕпел» патшалăх грантне çĕнсе илчĕ – апла эпĕ хам ĕçе тĕрĕс тăватăп. Пĕлтĕр Ĕпхӳре «Голос Евразии» фестиваль иртрĕ, эпир, Чăваш патшалăх телевиденийĕн пултаруллăх ушкăнĕ, унта хутшăнса гран-при çĕнсе илтĕмĕр. Мухтаннă пек пулать те, конкурссене, фестивальсене хутшăнсан пушăлла таврăнса курман эпир.

**– Сирĕн нумай енлĕ талантăр çакăнпах вĕçленмест, чăваш çыравçисенчен эсир пĕрремĕш çын палиндромсемпе çыраканни, çапла мар-и?**

– Мана чăнах та «палиндром пионерĕ» тесе калаççĕ.

**– Йĕркери сăмахсем сулахайран сылтăмалла вуласан та, сылтăмран сулахаялла та пĕр пек. Ятарласа шутласа лармалла пулĕ çакна.**

– Çук, ятарласа шутласа асапланса кăлармастăп. Мĕнле пиçсе çитет – çапла çыратăп. Чĕлхе хăвачĕ, асамлăхĕ антăхтарса ярать.

### БЕЛЬМАН* УЯВĔ

*Палиндром*

Çĕр, ар, ăн – янăрарĕç:
Харăс ĕçĕр!
Укçасăр ăсаç – курĕçĕ сăрах.
– Çĕнтертĕмĕр ĕмĕртен: ĕç
тепре шерпет!
– Çĕклем эмел кĕç –
ĕç, çав асама саваççĕ.

– Микаэле, ак, им! –
теç. – Ĕçет!
– Тав сана, сват, –
терĕ вырăсĕ. –
Сăри вĕРет...
Ав, Атнерĕ:
– Кĕрен тава, –
тет.
– Кил, «Лик»! –
тет
Илли...
Ик Кенин екки –
Ик генин екки...

– Енил, сăра пар, ăслине!
– Ил, сăру пур, ăсли.
Харăс! ăру пур – ăсăрах.
Харăс! Сăру пур ăссăрах.
Ĕçкӳ, чӳкçĕ,
тасах, лайăххах-ха –
Хăй алхасать,
Урă пушă шупăру
çеç.
Ĕç, çар, ăн – янăраççĕ...

Сăрăр – ăрăс!
Сăра – парăс!
Сăра мар – ăс:
«Эпĕ чап, ăс сăпачĕпе –
пĕтерӳçĕ – çӳретĕп»,
тет...

...Эпĕр ĕçрĕмĕр çĕрĕпе.
...Ĕнтĕ пур ăсу – сăру пĕтнĕ.
ака, 2005.

*Швед юрăçи Карл Микаэль Бельман юхăмĕ 10 çул тултарнă ятпа.

**– Марина, сирĕн нумай енлĕ пултарулăхăра асăнтăм ĕнтĕ пĕрре, ĕненмелле мар пулсан та – чăнлăха пытарма çук. Анчах хăш вăхăтра пурнăçласа ĕлкĕретĕр шухăшăрсене? Ситменнине тата çул çине тухасси те час-час...**

– Çул çӳревсене юрататăп эпĕ. Интереслисем çĕр çинче темĕн чухлĕ, шухăшсене пурнăçласа ĕлкĕрес килет. Шкулта чухнех манăн тутарла вĕренес килетчĕ. Эпĕ Патăрьел районĕнчен, тутар ялĕсем пит инçех мар. Малтан кĕнекесем-словарьсем, пластинкăсем илсе вĕренме хăтлантăм. 10 класра пирĕн шкула çывăхри тутар ялĕнчен 8 вĕренекен çӳреме пуçларĕç, вĕсенчен ыйтаттăм.. Анчах тутарла вĕренесси пулмарĕ ун чух. Кайран туркăлла вĕренме тӳр килчĕ. Çавăн хыççăн тин тутар чĕлхи «çăмăллăн» парăнчĕ мана...

Эпир вăхăт пирки калаçаттăмăрчĕ? Çыннăн пĕрре пурăннă чухнех темиçе пурнăç пурăнма май килнĕ пулсан эпĕ пĕринчен анне кăна пулăттăм, нумай ачаллă анне. Эпĕ вĕсене хам шутланă пек, туйнă пек ырра, лайăххине вĕрентĕттĕм.

Теприне эпĕ наукăна халаллăттăм хама, интереслентерекен пулăмсене тĕпчĕттĕм. Çапла кашни пурнăçра мĕн-тĕр туса ĕлкĕрĕттĕм.

**Татьяна ВАСИЛЬЕВА.**
E-mail: wassatan@mail.ru

**М.Карягина** архивĕнчи сăнӳкерчĕк.